26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
НОЯБРЬ
28
ВЫРСАРНИКУН
235(6472) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Государствăна тырă сутас ĕçе большевикла ертсе пымалла

Вирçĕмĕш çул ĕнтĕ пирĕн совет халăхĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяррăн юн тăкса вăрçать. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, аслă полководец Сталин ертсе пынипе çав тери пысăк йывăрлăхсене пăхмасăрах, фашистла Германин броньăланă кĕтĕвĕсене тытса чарма пултарчĕ кăна мар, хăй наступленин пуçласа ярса тăшмана хытăн аркатса пычĕ, халĕ те нимĕç çарĕсене таптаса малалла куçса пырать. Хĕрлĕ Çар воинĕсем хамăрăн совет çĕрне утăм хыççăн утăм тасатса пыраççĕ. Анчах умра йывăрлăхсем нумай-ха. Тăшмана пĕтĕмĕшпех çапса аркатман-ха, вăл урса кайсах хирĕç тăрать, пирĕн совет çĕрĕн пысăк пайне асап кўрет.

Нимĕçсене пуçĕпех пĕтерсе тăкса хамăрăн совет çĕрне фашистла ирсĕрсенчен пĕтĕмĕшпех тасатса çитерес тесен, тылăн фронта татах та ытларах пулăшмалла. Çакна ăнланса, Хĕрлĕ Çарăн çапăçу хирĕнчи паттăр ĕçĕсемпе хавхаланнă совет çыннисем хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă доклачĕ çине ответлесе, промышленноçра, транспортра тата ялхуçалăхĕнче социализмлă ăмăрту çĕнĕ вăй-хăватпа сарăлса кайрĕ.

Колхозлă ялта, аслă çулпуç чĕнннипе, патриотла çĕнĕ юхăм — государствăна тырпул тата ытти тĕрлĕ ялхуçалăх çимĕçĕсем сутас ĕç пуçланса кайрĕ. Колхозниксем государствăна обязательнăй йĕркепе тырă парса татнă хыççăн, государствăна сутма та тырпулăн пысăк пайне уйăрса хучĕç. Çĕршывпа фронта тыр пул кирлĕ. Тырпулсăр эпир тăшмана çĕнтерме пултараймастпăр. Çавăнпа та ĕнтĕ колхозсемпе колхозниксенчен государство валли тырă сутăн илес ĕç çине партипе правительство уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ. Нимĕнле йывăрлăхсене пăхмасăрах, государство çав ĕçе туса ирттерме промышленноçăн питех те кирлĕ таварĕсене парать. Пирĕн республикăри потребительсен кооперацийĕ енĕпе кăна государство тырă сутакансем валли питех те кирлĕ таварсем — краççин, трикотаж, çăмпа пурçăнран тĕртсе тунă пусма таварсем, хуçалăхра кирлĕ япаласем, супăнь, сахăр тата ытти те 45 миллион тенкĕлĕх уйăрса парать.

Государство умĕнчи пысăк ответлăха туйса илсе, Чăваш республикинчи малта пыракан колхозсем тата темиçе пин колхозниксемпе колхозницăсем халĕ государствăна тырă сутас ĕçе хутшăнчĕç. Колхозри темиçе пин активистсемпе стахановецсем, тўрĕ кăмăлпа ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем перекетленĕ тырпула государствăна сутса Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Государствăна 40-шер, 50-шар, 100-шер пăт тырă сутнă колхозниксемпе колхозницăсен ятне пирĕн хаçатра ĕнтĕ чылай палăртнă. Çав çынсем вĕсем—пирĕн тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем государство интересĕсене чи çўллĕ вырăна хураççĕ, фронтшăн, çĕнтерўшĕн нимĕн те хĕрхенсе тăмаççĕ.

Государство валли тырă сутăн илес ĕçе Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Калинино, Куславкка районĕсенче лайăх йĕркеленĕ. Унти парти райкомĕсемпе райисполкомсем колхозниксен патриотла пуçарулăхне ертсе, хавхалантарса пыраççĕ, вĕсем çак ĕçе ăнăçлăн туса ирттерме партипе совет тата колхоз активне мобилизациленĕ.

Анчах та государство валли тырă сутăн илес ĕçе пур çĕрте те мар-ха кирлĕ пек организациленĕ. Çакă питех те ответлă ĕç çине Ишлей районĕн руководителĕсем çав тери сўрĕккĕн пăхнă. Парти райкомĕн секретарĕ Сидоров юлташ çак питех те ответлă ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шанса ларнă. Вăл государство валли тырă сутăн илес ĕçе ăнăçлăн ирттерме партипе совет активне мобилизацилемен. Унта çак ырă тавра халăх хушшинче нимĕнле ăнлантарулла ĕç те туса пымаççĕ, государствăна тырă сутни фронта пысăк пулăшу панине пĕлтерни çинчен колхозниксене ăнлантарса памаççĕ. Кунтан та ытларах, кая юлнă шухăш-кăмăл хыççĕнче çапкаланса пырса, район руководителĕсем çак ĕçе пĕтерсе лартма хăтланакансемпе таткăлăн кĕрешмен. Енер ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ ВКП(б) Ишлей райкомĕн секретарьне Сидоров юлташа строгий выговор пачĕ, ĕçе юсамасан, ăна партирен кăларасси çинчен асăрхаттарса хăварчĕ.

Государство валли тырă сутăн илес ĕçе вăйлатма Шупашкар районĕн пысăк майсем пур. Анчах кунта ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Караушев юлташ та, райисполком председателĕ Миронов юлташ та халĕ туса ирттерекен пысăк ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхман. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене çак ĕç çинчен ăнлантарса паман, коммунистсемпе комсомолецсене тата колхоз активне государствăна тырă сутас ĕçе активлăн явăçтарман. Çавна пула районри нумай колхозсенче государствăна тырă сутас ĕçе тытăнман-ха. Районри руководительсем çак ĕçе юриех пăсакансене хирĕç кĕрешмеççĕ. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ партин Шупашкар райкомĕн секретарьне Караушев юлташа государство валли тырă сутăн илес ĕç çине ответсăрла пăхнăшăн выговор пачĕ, ку тĕлĕшпе районри пĕтĕм ĕçе урăхлатса çĕнетме тата государствăна тырă сутассине ăнăçлăн пурнăçлама хушрĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Ишлей тата Шупашкар районĕсем тĕлĕшпе йышăннă решени пур районсен руководителĕсемшĕн те, уйрăмах Элĕк, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпў районĕсен руководителĕсемшĕн хытăн асăрхаттарни пулса тăрать.

Хăшпĕр районсенче сутăн илнĕ тырра турттарас ĕçе вăраха яраççĕ. Колхозсенче транспорт бригадисене çĕнĕрен ĕçлеттерме тытăнмалла. Сутăн илнĕ тырра хатĕрлев пункчĕсене декабрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр леçсе памалла. Хатĕрлев пункчĕсен вара талăкĕ-талăкĕпех ĕçлемелле.

Заготзернопа потребительсен кооперацийĕн системинче те çитменлĕхсем нумай-ха. Пур хатĕрлев пункчĕсем те мар-ха тырпула йышăнма кирлĕ пек хатĕрленсе çитнĕ. Хатĕрлев пункчĕсен директорĕсем тырпула татти-сыпписĕр йышăнса тăрассине йĕркелемен. Çавна пула тырăпа килнĕ колхозниксен ирĕксĕрех вăхăта ахаль тăрса ирттерме лекет. Хатĕрлев пункчĕсенче культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелемен, Чăвашсоюз хатĕрлев пункчĕсенче чайнăйсем уçас тĕлĕшпе те нимĕн те туман.

Канашри хатĕрлев пунктĕнче технорук Михайлов тата склад заведующийĕ Павлов тырă илес ĕçе организацилес вырăнне ĕçке ярăннă. Çак саботажниксене арестлесе суд аллине панă. Хатĕрлев пункчĕн директорне Красильников юлташа та хаяррăн айăпланă.

Анчах ĕç çителĕксĕр пынин сăлтавĕ хатĕрлев органĕсем начар ĕçленинче çеç мар-ха. Фактсем çакна кăтартса параççĕ: государствăна тырă сутас ĕçе пăсакан çынсем чылай колхозсенче пур-ха. Акă мĕншĕн районсен, ялсовечĕсемпе колхозсен руководителĕсен колхозниксене государствăна тырă сутас ĕç питех те пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен анлăн ăнлантарса памалла, çавăнпа пĕрлех государствăн çак питех те кирлĕ мероприятине тĕрлĕ майпа пăсма хăтланнисене сирмелле.

Отечественнăй аслă вăрçă условийĕсенче тырă хатĕрлевне саботаж тăвакансем, государствăна улталас, хăйсене панă плана пурнăçа кĕртессине пĕтерсе хурас ĕçе организацилекенсем Тăван çĕршывшăн чи тискер тăшмансем пулса тăраççĕ. Çав тăшманĕсене нимĕнле шеллесе тăни те пулмалла мар, вĕсем пирки çиийĕнчех таткăлă мерăсем йышăнмалла.

Государствăна тырă сутас ĕç, обязательнăй поставка пекех, питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать, ăна та обязательнăй йĕркепех туса ирттермелле.

Çавăнпа та ĕнтĕ кашни колхозникпе колхозăн, партире тăракан тата партире тăман большевиксен чыслă ĕçĕ, районсен, колхозсен тата ялсоветсен руководителĕсен тўрĕ те чи пысăк задачи—государствăна тырă сутмалли плана большевикла пурнăçа кĕртесси пулса тăрать

Улмуççие сивĕрен сыхлаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Тойкилтри туллимăр вăтам шкулта вĕренекен ачасем (директорĕ К. Степанов) кăçал октякрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче, кашни 5—10-шар тĕп çырла йывăççисем тата улмуççисем лартса, сад пахчи турĕç. Пахчана пĕтĕмпе 100 тĕп ытла улмуççи, 100 тĕп çырла йывăççи лартнă. Улмуççи тунисене ачасем улăм пĕтĕрсе сыхрĕç, шалча картасем тытса хўтĕлерĕç.

М. СТЕПАНОВА.

Çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерўсем тăвакан Хĕрлĕ Çара колхоз хресченĕсем государствăна тырă ытларах сутнипе саламлаççĕ

Хатĕрлев пунктне 50.325 пăт тырă леçнĕ

ВАРМАР, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар Гомель хулине тăшмантан ирĕке кăларнине хавхаланса, районри колхозниксемпе колхозницăсем перекетленĕ тырра государствăна сутас ĕçе вăйлатрĕç. Районĕпе пурĕ 108.946 пăт тырă сутнă, хатĕрлев пунктне 50.325 пăтне леçнĕ.

Ку ĕçе кашни колхозникпе колхозница хутшăнма тăрăшать. «Ударник» ялхуçалăх артелĕнчи 72 çулхи колхозник Дмитрий Васильев государствăна 7 центнер тырă сутрĕ. Ку колхоз государствăна пĕтĕмпе 46 тонна тырă сутнă. Средников, Федотов колхозниксем 30-шар пăт сутрĕç.

— Манăн хĕрпе пĕр ывăлăм фронтра. Кашни çырурах вĕсем: фронта ытларах пулăшăр, çĕнтерў сехечĕ эсир Хĕрлĕ Çара пулăшнинчен те килет, тесе çыраççĕ,—тет Порфирий Федотович. Унăн примерĕпе ытти вата колхозниксемпе колхозницăсем те государствăна темиçешер пăт тырă сутрĕç.

«Арапуç» колхоз государствăна 130 тонна тырă сутрĕ. Колхоз председателĕ В. Соснов юлташ çак ĕç валли хăйĕн 80 пăт тыррине пачĕ.

Государствăна тырă сутас ĕç «Хĕрлĕ Шăхаль», «Хĕрлĕ Кĕтне», «Большевик» колхозсенче те пысăк çĕкленўпе пырать. Вĕсем государствăна сутнă мĕнпур тырра çак кунсенчех хатĕрлев пунктне леçсе пĕтереççĕ.

А. СМИРНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Хĕрлĕ Çар Гомель хулине илнĕ ятпа—хĕрлĕ обозсем

КАЛИНИНО, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче государствăна тырă сутасси патриотизмла пысăк çĕкленўпе пырать. Колхозсем тата колхозниксем темиçе кун хушшинче кăна государствăна 105.000 пăт тырă сутнă. Вăл хисепрен 23.180 пăт тырра Вăрнарти хатĕрлев пунктне леçнĕ.

Енер районри колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ Белоруссин область центрне—Гомель хулине илнĕ войскăсене саламласа панă приказа итлерĕç. Хĕрлĕ Çар тунă чаплă çĕнтерў колхозниксене савăнтарать. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн наступлени тăвас вăйне татах та ўстерме пулăшасшăн. Паян нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар Гомель хулине илнĕ ятпа государствăна сутнă тырра хĕрлĕ обозсемпе кайса леçрĕç. «Путь Ленина» колхоз 18лавлă бозопа 180 пăт, Ленин ячĕпе тăракан колхоз 50 лавлă обозпа 1.000 пăт, «Путь социализма» колхоз 10 лавлă обозпа 200 пăт тырă кайса сутнă. Хĕрлĕ обозсен йышĕ ўссех пырать.

Чылай колхозниксемпе колхозницăсем, Хĕрлĕ Çар çĕнĕ çĕнтерў туни çинчен пĕлсен, государствăна хушса тырă сутма пуçларĕç. Çапла, «Первомайски» колхоз членĕсем ноябрĕн 20-мĕшĕнче пулса иртнĕ пухура государствăна 1.700 пăт тырă сутма пулнă. Хĕрлĕ Çар Гомель хулине илни çинчен пĕлсен, вĕсем тата 300 пăт сутрĕç. «Пирĕн тырă нимĕç захватчикĕсене хамăр çĕршывран хăвăртрах тасатма пулăштăр», теççĕ колхозниксем.

Райсоюз государствăна тырă сутакансем валли промышленность таварĕсем—супăнь, краççин, тăвар тата ытти тĕрлĕ таварсем те нумай илсе килнĕ.

Ф. РОМАНОВ.

Государствăна 83.000 пăт тырă сутрĕç

КАНАШ. Колхозниксемпе колхозницăсем паттăр Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне татах тĕреклетес кăмăлпа государствăна тырă сутаççĕ. Паянхи кун тĕлне государствăна пурĕ 83.000 пăт тырă сутнă. Киров ячĕпе тăракан колхоз—7.380 пăт, «Красная Чувашия» колхоз—2.250 пăт сутрĕç. Ытлашши тырра государствăна сутас ĕçе МТС-ра ĕçлекенсем те активлăн хутшăнаççĕ. Тракторист Н. Павлов юлташ 30 пăт сутрĕ. Трактористкăсем А. Иванова, Куракова, Волкова юлташсем те хăйсен ытлашши тыррине государствăна 10-шер пăт сутрĕç.

Ф. АНТОНОВ.

Сутнă тырра çиййĕнчех хатĕрлев пунктне турттараççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Паянхи кун тĕлне районĕпе государствăна 70.200 пăт сутнă. Хатĕрлев пунктне 13.340 пăт леçнĕ.

Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем государствăна 2.820 пăт сутрĕç. Вĕсем çав тырра икĕ кун хушшинче хатĕрлев пунктне пĕтĕмпех леçрĕç. «Красная звезда» колхоз 1.650 пăт, колхоз председателĕ Кастров юлташ 20 пăт сутрĕ.

Тырă сутас ĕçе 2.450 колхозник хутшăнчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем фронтпа çĕршывшăн нимĕн те хĕрхенмеççĕ, пĕтĕм вăя çĕнтерў тума параççĕ.

А. МОРЯКОВ.

Государствăна тырă сутас ĕçе хăвăртлатмалла

КУКЕÇ. Ноябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне районĕпе государствăна 69 пин пăт ытла тырă сутнă. Вăл шутран 7.869 пăтне хатĕрлев пунктне леçсе панă.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 4.600 пăт сутрĕç. Колхоз председателĕ Гаврилов юлташ 30 пăт пачĕ.

«Строитель» колхоз членĕсем те ытлашши тырра 3.660 пăт государствăна сутрĕç.

Верховный Главнокомандующи Гомель хулине ирĕке кăларнă ятпа панă приказа радиопа итленĕ хыççăн, колхозниксемпе колхозницăсем çĕршывпа фронта пулăшас ĕçе татах та вăйлатма пулчĕç. Шĕмшерти «Серп и молот» колхозри 60 çулхи колхозник Яков Иванов государствăна пĕр центнер тырă сутрĕ.

Комсомолец Ильин 35 пăт сутрĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çаршăн нимĕн те шеллесе тăмаççĕ. Вĕсем государствăна тырă памалли плана тултарнă хыççăн, фронта ытларах пулăшас шутпа, государствăна хăйсен перекетлесе хăварнă тыррине сутма тытăнчĕç. Çак ĕçе ВЛКСМ пуçламĕш организацийĕсем те хутшăнаççĕ. Вĕсем колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатрĕç.

Çавăнпа пĕрлех государствăна тырă сутас енĕпе хăйсем пример кăтартаççĕ. Комсомолăн Упи ялсоветĕнчи «Янмурзино» колхозри пуçламĕш организацин секретарĕ Семен Ильин государствăна 35 пăт тырă сутрĕ. Ытти комсомолецсем те хавасланса тырă сутаççĕ. Вĕсене кура рядовой колхозниксенчен—Тимофеев 26 пăт, Ф. Лаврентьев 32 пăт, старши конюх Г. Степанов 30 пăт сутрĕç.

Н. СКВОРЦОВ.

Укерчĕк çинче: Чкаловски районри «Красный Октябрь» колхоз председателĕ Хуснутдин Булатов. Вăл государствăна 20 пăт тырă сутнă.

Н. ДАНИЛОВ фотоўкерчĕкĕ.

Пирĕн паттăр земляка—чыс та мухтав!

Днепр патĕнчи çапăçусенче пулнă гварди сержантне А. И. СИДОРИН юлташа Совет Союз Геройĕн званине панă

Кувакино районĕнчи Кладбищи ялне фронтран питех те савăнăçлă хыпар килнĕ. Фронтра тухса тăракан «Звезда Советов» хаçатăн редакторĕ 65 çулхи инвалида И. Я. Сидорин юлташа унăн 19 çулхи ывăлĕ—гварди сержанчĕ Александр Сидорин Днепршăн çапăçса чапа тухнă ятпа саламлă çыру янă.

Киевран çурçĕртерехре Днепр шывĕ урлă хăюллăн каçнăшăн, Днепр шывĕн хĕвеланăç енчи çыранĕнчи плацдарма лайăх çирĕплетнĕшĕн тата çав çапăçусенче паттăрлăхпа геройлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх Хĕрлĕ Çарăн 507 воинне Совет Союз Геройĕн званине панă.

Вĕсем хушшинче пирĕн паттăр земляк — 19 çулхи гварди сержанчĕ Александр Иванович Сидорин пур.

Çак хыпаршăн геройăн ватă ашшĕпе амăшĕ çеç мар, пĕтĕм ял-йыш хаваслаканнă. «12 лет Октября» колхоз членĕсем тăван земляк патне саламлă çыру янă.

— «Ылттăн Çăлтăр» медаль тата Ленин орденĕ илсе, Совет Союз Геройĕ пулма тивĕçлĕ пулнишĕн сире, Александр Иванович, пĕтĕм чĕререн тав туса саламлатпăр, — тенĕ çырура.—Эпир сирĕнпе савăнса мухтанатпăр, сире ирсĕр тăшмана хирĕç малашне те ăнăçлăн кĕрешме сунатпăр.

Пире, пĕтĕм совет халăхне хавхалантарнă пекех, пĕр çутă ĕмĕт — нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пуçĕпех çапса çĕмĕрес ĕмĕт хавхалантарать. Эпир тăшмана курайман туйăмпа çунса тăратпăр, çав вăхăтрах Тăван Хĕрлĕ Çара чун-чĕререн саватпăр.

Эпир кăçал уйхирте ырми канми ĕçлерĕмĕр. Тырпулсене иртнĕ çултинчен 20 кун маларах пухса кĕртрĕмĕр, халĕ çуракине тимлĕн хатĕрленнĕ çĕре пĕтĕм вăя хуратпăр, чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттаратпăр. Тăшмана хăвăртрах çĕнтерессишĕн нимме те шеллесе тăмастпăр».

Совет Союзĕн Геройĕ гварди сержанчĕ-пулеметчик Александр Сидорин—питех те çамрăк. Вăл 1924-мĕш çулта кăна çуралнă. 7 çул вĕреннĕ, ун хыççăн колхозра ĕçленĕ. Вăрçă тухсан, икĕ пиччĕшне Хĕрлĕ Çара ăсатнă вăл.

Питех те йывăр пулнă ватă çынсене юлашки ывăлĕпе, Александрпа, уйăрăлмашкăн. Ăна Хĕрлĕ Çара ăсатнă чухне ашшĕ çапах кăмăлне хытарнă.

— Çĕнтерўпе таврăнасса шанатăп, ывăлăм, — тенĕ ватă мучи.

— Тăшманран ан шиклен, çирĕппĕн кĕреш!..

Пулас герой çак сăмахсене чĕре варринче тытса, 1942 çулта Хĕрлĕ Çар ретне тухса кайнă. Полк шкулĕнче вĕреннĕ. Унтан вăл вăрçăн йывăр та тумхахлă çулĕпе Сталинградран Днепра çитиччен паттăррăн утса тухнă. Атăл сĕткенĕпе вăй илсе çитĕннĕ яш-воин ватă Днепра Атăлран хĕрў салам каланă.

Чăнкă çыранлă Днепр! Умра — Советлă Украинăн чĕри — Киев. Гитлерла варвăрсем ăна çунтарнă. Пулас герой Днепрăн сылтăм енчен ним айăпсăр совет хĕрарăмĕсемпе тăлăх ачасем пулăшу кĕтнине туйса тăнă. Тăван украинецсене нимĕçсен тамăкĕнчен хăвăртрах çăлассишĕн çĕкленнĕ вăл 15 юлташĕпе пĕрле, вара Днепр шывĕ урлă каçса халăхăн чĕринче ĕмĕр-ĕмĕр юлмалла мухтавлă ĕç тунă.

...Днепр шывĕн леш енче совет пулеметчикĕсене хирĕç тăшманăн пĕр батальона çити вăйĕ тăхлан çăмăрĕпе кĕтсе илнĕ

—Çирĕп тăрар, юлташсем! Каялла пĕр утăм та!..—тенĕ сержант Сидорин.

— Чакмастпăр! — пĕр харăс ответленĕ унăн шанчăклă юлташĕсем.

Пирĕн хăюллă пулеметчик çав çапăçура 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

Чыс та мухтав Днепршăн паттăррăн çапăçнă çамрăк героя!

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИ фрончĕн çарĕсем çавăрса илмелли хăюллă маневр туса ăнăçлăн наступлени туса пырса тата са, паян, ноябрĕн 26-мĕшĕнче, Белоруссин ССР-ĕн пысăк область центрне — ГОМЕЛЬ хулипе чугун çул тĕввине тытса илнĕ.

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче ПРОПОЙСКРАН хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче — МАШЕВСКАЯ СЛОБОДА, ХОТИЩЕ, КУЛЬШИЧИ, ЗАПОЛЯНЬЕ, ХАЧИНКИ, КУЛИКОВКА, БАХАНЬ, ТУШЕВКА, ОСТРОВ, САПОЖКИ ятлă пысăк пунктсене.

СОЖ тата ДНЕПР шывĕсем хушшинче (Гомель районĕнче) пирĕн çарсем ПРИСНО, ЛОПАТИНО, КОСТЮКОВКА, ЕРЕМИНО, ДАВЫДОВКА, БАБОВИЧИ, СОСНОВКА, БОРОВАЯ, АЛЕКСАНДРОВКА, КОПАНЬ ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ.

БЕРЕЗИНА шывĕн анат тăрăхĕнчи районĕнче пирĕн çарсем НИЖНЯЯ ОЛБА, ГОРОДОК, КАЛИНОВКА, ТОЛСТЫКИ, ОТРУБЫ, МОЙЧА, ВЕЛИКИЙ БОР, МАРМОВИЧИ, ДАВЫДОВКА, ПРОСВЕТ, ЛЮДИВИНОВКА ятлă халăх пурăнакан пунктсене тата ШАЦИЛКИ ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

РЕЧИЦА хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступлени туса пынă, СТАРЫЙ НАХОВ, НОВЫЙ НАХОВ, ГЛИННАЯ СЛОБОДА, УЖИНЕЦ, АЛЕКСИЧИ, БОГУСЛАВИЦА, ГЛИНИЩЕ ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ.

КОРОСТЕНЬ, ЧЕРНЯХОВ тата БРУСИЛОВ районĕсенче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

КРЕМЕНЧУГРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн çирĕплетнĕ пункчĕсене — КУРЧАНОВКА, ЧЕЧЕЛЕВО, БЕЛЕЦКОВКА, СВИНАРКА, БРАИЛОВКА, ТАЛОВА БАЛКА, ВОРОБЬЕВКА ятлă пунктсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 75 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата сўлелле перекен артиллери тăшманăн 21 самолетне персе ўкернĕ.

☆ ☆ ☆

Белорусси фронтĕнчи çарсем Белоруссин область центрĕ тата пысăк промышленность центрĕ пулса тăракан Гомель хулине тытса илнĕ. Нимĕçсем Гомель хулине хăйсен Полесье енчи оборонин вăйлă пункчĕ туса хунă. Хула патне пымалли вырăнсенче укреплениесем туса хунă, унта артиллери нумай илсе пынă, питĕ вăйлăн хирĕç тăнă. Пирĕн çарсем, вирлĕн пыра-пыра çапса, тăшман оборонине йĕркерен кăларнă, унтан вара, çавăрса илмелли хăюллă маневр тунă хыççăн, паян Гомель хулине тытса илнĕ. Гомель хулишĕн пынă çапăçусенче тăшманăн пысăк вăйĕсене аркатса тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ — тупăсем, минометсем, ывăтмалли аппаратсем нумай тата боеприпассемпе çар материалĕсен пысăк склачĕсене тытса илнĕ.

Тăшман, контратакăсем туса, совет чаçĕсене малалла кайма чарма хăтланнă. Пĕр участокра нимĕçсем 20 хутчен контратака тунă. Уйрăм çирĕплетнĕ пунктсем темиçешер хут аларан алла куçнă. Каçалапа пĕр соединенин чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăнса илнĕ. Нимĕç çарĕсем калама çук пысăк çухату тўсеççĕ. Юлашки кунсенче пĕр районра кăна нимĕçсен 4.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 9 танк, 48 хир тупи тата хăй тĕллĕн çўрекен 12 тупă пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çарсем тăшмантан 8 танк, 46 тупă, 58 миномет, ывăтмалли 40 аппарат, 140 пулемет, 40 радиостанци, снарядсемпе патронсем нумай тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Нумай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Пропойскран хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступлени туса пынă.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ÇĔСĔ

* * *

Березина шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тата Мозырьпе Жлобин хушшинчи чугун çул çинчи Шацилки ятлă станцие тытса илнĕ. Пĕр чаçăн боецĕсем çав станцие хӳтĕлесе тăракан нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă, 400 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. 2 артиллери батарейи, 6 миномет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Речица хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступлени туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем, вăрманлă-шурлăхлă вырăнта кĕрешсе, малалла куçнă та нимĕçсене вăйлă çирĕплетнĕ пунктран хĕссе кăларнă. Çав пунктшăн çапăçса, гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. 4 тупă, 46 пулемет, 300 винтовкăпа автомат тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тиенĕ 180 лав тытса илнĕ.

* * *

Черняхов тата Брусилов районĕсенче пирĕн çарсем тăшманăн атакисене сире-сире янă. Пĕр соединенири артиллеристсем кун каçа нимĕçсен 18 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра пĕр чаçăн боецĕсем тăшманăн атакине сирсе янă чухне 11 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 4 тупă, 13 бронемашина тата автоматчиксем ларса пыракан 11 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кременчуг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр участокра гитлеровецсем уйрăмах вăйлăн хирĕç тăнă. Хаяррăн çапăçса, пирĕн чаçсем нимĕçсене каялла чакарнă, унтан, хыçран хăваласа пырса, вĕсене пысăк çухату тӳстернĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 800 вилли ытла выртса юлнă, персе çĕмĕрнĕ 17 танк тата хăй тĕллĕн çӳрекен 4 тупă ларса юлнă.

* * *

Баренц тинĕсĕнче нимĕçсен 6.000 тонна таякан суднине шыва путарнă.

* * *

Крымра кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен автоколоннине тапăннă. Хаяррăн çапăçса, партизансем 40 гитлеровеца вĕлернĕ тата çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 5 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Крымри партизансен тепĕр отрячĕ тăшманăн куçса çӳрекен çăкăр заводне тата 6 грузовой автомашинине сирпĕнтерсе янă.

* * *

Юлашки кунсенче нимĕçсен «боевой группăсем» тенĕ ушкăнĕсенчи тата ваккаса тунă хутăш ротăсенчи салтакĕсене чылайĕшне тыткăна илнĕ. Пĕр участокра нимĕçсен 1-мĕш танковăй армийĕ çумĕнчи хĕçпăшал складĕнче ĕçлекен 9 салтака тыткăна илнĕ. Вĕсем стройра тăма юрăхсăр пулнă, вĕсем хĕçпăшалсен 670-мĕш складĕнче ĕçленĕ. Тыткăна лекнисем çапла каласа панă: çав складра ĕçлекен салтаксемпе пĕрле тата 55-мĕш строительнăй батальонри, 36-мĕш запасной батальонри тата чугун çул çинчи 219-мĕш строительнăй батальонри салтаксене те çапăçăва кĕртсе янă.

Нимĕçсен 306-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи ветеринари ротинче атăçă пулса ĕçленĕ Иозеф Кастнер, тыткăна лекнĕскер, çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть мана часрах ĕçе пăрахса малти позицие кайма хушрĕç. Манпа пĕрле çăкăр пĕçерекенсен ротинчи, какай хатĕрлекен заводри тата ытти хуçалăх подразделенийĕсенчи салтаксене те окопсене ячĕç. Пире эсэсовецсен «Аслă Германия» ятлă дивизине ячĕç.

Нимĕçсен 57-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи снабжени тĕлĕшпе ĕçлекен 157-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Франц Ян çапла каласа панă: «57-мĕш пехотнăй дивизи ытла та пысăк çухату тӳсрĕ, вăл ĕнтĕ уйрăм дивизи пулса çапăçма пултараймасть. Унта мĕн пурĕ те 1.000 çынна яхăн çеç юлнă, çав çынсене халь 10-мĕш мотодивизие пăхăнса тăмалла тунă. Нумаях пулмасть мана снабжени ротинчи ытти салтаксемпе пĕрле хутăш ротăна ячĕç. Çав подразделение снабжени ротинчи, санитари взводĕнчи, связистсен взвочĕн обозĕнчи салтаксенчен тунă. Салтаксем çавăн пек хутăш ротăсене «вилмелли командисем» тесе ят панă. Пĕрремĕш çапăçурах пирĕн ротăри салтаксенчен çурри вилсе е аманса пĕтрĕ. Тепĕр çапăçура, вырăсем çывхарсан, эпир тыткăна парăнтăмăр».

Кашни гектартан çĕр пăт тыра илессишĕн ялти çамрăксем хушшинче социализмлă ăмăрту сарса ярар!

Вăрнар районĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăк колхозниксем Чăваш республикинчи мĕнпур комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Комсомолецсемпе комсомолка юлташсем, çамрăк колхозниксемпе колхозница юлташсем!

Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен Сталин юлташ тунă доклада эпир çав тери хавасланса итлерĕмĕр. Çулпуç пирĕн ĕçри паттăрлăха ырларĕ, фронта татах та ытларах пулăшма чĕнчĕ.

Пĕр уйăх каярах, Ленинпа Сталин комсомолĕ 25 çул тултарас умĕн, эпир, Вăрнар районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем, пирĕн çĕршыври нумай миллионлă çамрăксемпе пĕрле, Сталин юлташ патне ямалли çырăва алă пусрăмăр. Эпир ун чухне ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлеме, кĕске срокра авăн çапса пĕтерме, государствăна тыра парса татма, кĕрхи çĕртме туса пĕтерме, выльăх-чĕрлĕхе тутă усраса ăшă витесенче хĕл каçарма хатĕрленсе çитме, 1944-мĕш çулта вăйлă тыр-пул туса илессишĕн пуçланнă ăмăртăва ертсе пыма сăмах патăмăр.

Çав сăмаха пурнăçа кĕртсе пырса, пирĕн районри çамрăксем халĕ хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлеççĕ, нимĕç захватчикĕсене хамăр çĕршывран хăваласа кăларма Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшаççĕ.

Тăрăшса ĕçленине пула, эпир вăйлă тырпул туса илтĕмĕр. Пирĕн район государствăна тыра, аш-какай, çĕрулми срокчен парса татрĕ. Кунсăр пуçне, государствăна тата темиçе вунă пин пăт тыра сутнă. 1944-мĕш çулта çуртырисем акса хăварма пур колхозсем те çителĕклĕ таран вăрлăх хывнă. Пирĕн районри колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана ирттерсе тултарнă.

Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозри комсомолецсемпе çамрăксем колхозниксене тырпула пухса кĕртес ĕçре пысăк пулăшу пачĕç. Вĕсем бригадăсенче, звеносенче ĕçлерĕç, лобогрейкăсемпе, жнейкăсемпе ĕçлерĕç. Бригадир-комсомолкăсем Валя Миронова, Шура Фролова кăçал кашни гектартан 130 пăт ытла тыра илчĕç, хирти ĕçсене чи малтан туса пĕтерчĕç. «Победа» колхозри çамрăк колхозниксем те хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçларĕç. Звеньевая Валентина Степанова комсомолка гектар пуçне 110 пăт тыра туса илнĕ. Уравăш колхозĕнчи çамрăксем хăйсен вăйĕпе элеватор патне темиçе вунă пин пăт тыра тата çĕрулми леçрĕç. Комсомол организацийĕсемпе çамрăксем хушшинчи çыхăну тĕрекленчĕ, йывăрлăхсемпе кĕрешсе, пирĕн комсомолецсемпе комсомолкăсем пиçĕхрĕç.

Хаклă юлташсем! Тунă çитĕнӳсем пире лăпланса ларма ирĕк памаççĕ. Партипе правительство, Сталин юлташ колхозниксемпе колхозницăсене ялхуçалăх продукчĕсем татах та ытларах туса пама хушаççĕ. Килес çул кашни гектартан çĕршер пăт тыра туса илме тата вир, çĕрулми, техникăллă культурăсем ытларах туса илме пирĕн районри колхозсен пур майсем те çителĕклĕ.

Вăйлă тырпул туса илмелли майсене пирĕн кашни гектартан çĕршер пăт тыра туса илнĕ çамрăк колхозниксем кăтартса параççĕ. Эпир Чăваш республикинчи мĕнпур комсомолецсемпе комсомолкăсене, мĕнпур çамрăк колхозниксемпе колхозницăсене **гектар пуçне çĕршер пăт тыра туса илессишĕн** социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнетпĕр. Гектар пуçне çĕршер пăт тыра туса илекенсен чаплă юхăмĕ саралнăçемĕн саралса, çирĕпленнĕçемĕн çирĕпленсе пытăр. Вĕсен примерĕ мĕнпур çамрăксене хамăр çĕре юратса, агротехника кăтартнă пек тĕплĕн ĕçлесе тăма чĕнтĕр.

Çураки вăхăчĕ — колхозлă ялшăн питĕ кирлĕ, питĕ паха, питĕ ответлă вăхăт пулса тăрать. Килес çул вăйлă тырпул туса илессине кашни колхозăн паянах хатĕрлемелле. Вăхăт кĕтмест. Комсомолецсемпе комсомолкăсем, вăхăта сая ямасăр, лайăх хуçасем пек, халех çуракине хатĕрленме тытăнăр!

Тыра нумай туса илес тетĕн пулсан—çĕре лайăх çемçет!—тет çĕрĕç аслăлăхĕ. 1944-мĕш çулта пирĕн колхозниксем хире кăçалхинчен виçтăвата хут ытларах тислĕк тăкма шут тытрĕç. Эпир кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра 3250 центнертан кая мар кĕл, 2000 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухма, уйхире 500.000 лав тислĕк тăкма сăмах паратпăр. Кашни колхозрах удобренисене хире турттарса тăракан транспорт бригадисем пулччăр. Вĕсене хастарлă комсомолецсемпе çамрăк колхозниксем, çав ĕçе фронтри пек йĕркеллĕ те васкавлăн тума пултаракан çамрăксем ертсе пычччăр.

Çĕрти нӳрлĕх тырпул валли çителĕклĕ таран сыхланса юлтăр тесен, хирте юр тытса юлмалла. Эпир хамăр вăйпа 6000 гектар çинче юр тытса хăварма сăмах паратпăр. Çак ĕçе пионерсемпе шкул ачисене анлăн явăçтарма пулатпăр. Мĕнпур çамрăксене юр тытас ĕçе тивĕçлипе организацилеме чĕнетпĕр.

Вăйлă тырпул туса илес ĕçре тата вăрлăх ыйтăвĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн районри çамрăк колхозниксем мĕнпур хывнă вăрлăха тата страховой фонда декабрĕн 1-мĕшĕччен сортласа пĕтерсе лайăх йышши вăрлăх туса хума тăрăшĕç. Пăрса йышши культурăсен вăрлăхне алăпа сортлас ĕçе йĕркелер. Комсомолецсемпе комсомолка юлташсем, çамрăк бригадирсемпе звеньевойсем, вăрлăха пăсăласран тата салатса пĕтересрен лайăх сыхласа усрас ĕçе организацилĕр! Вăрлăхсене лайăх пăхса усраманшăн эпир кашни колхозрах çамрăксен контрольнăй постĕсене тума сăмах паратпăр.

Уйхирти ĕçсем пĕтни нумай пулать. ĕнтĕ. Халĕ хирсенче тата итемсем çинче ларакан ялхуçалăх машинисене пухса мастерскойсене леçмелле, вĕсене унта халех юсама тытăнмалла. Пирĕн районра юсакан кустсвой мастерскойсем пулаççĕ. Комсомолецсем тимĕрçĕ ĕçне вĕренме çав мастерскойсене 25 çынна яраççĕ. Пур ялсенче те машинăсен запаслă пайĕсене пухма тытăнатпăр. Кашни колхозрах эпир плугсене, сеялкăсене, сӳресене, культиваторсене мĕнле юсанине хытă тĕрĕслесе тăрапăр.

Тутă та вăйлă лашасем пире ялхуçалăх ĕçĕсене кĕске срокра тата лайăх туса ирттерме май парĕç. Комсомолецсенчен конюхсем пулса ĕçлеме 40 çынна уйăрса лартатпăр. Лаша пăхас ĕçре обезличка ан пултăр. Кашни сеялкăна мĕнле лаша кӳлмеллине халех палăртса хумалла. Çамрăк колхозниксене эпир лаша таврашне пĕтĕмпех юсаса хума, кашни лаша валли уйрăм сӳсмен-хăмăтсем уйăрса хума чĕнетпĕр. Вăйлă тырпул звенисем кăçал нумай çамрăк колхозниксемпе колхозницăсемшĕн шкулсем пек пулса тăчĕç. Ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăк колхозниксен слечĕ çамрăксене кашни колхозрах çавăн пек звеносем тума чĕнет. Колхоз правленийĕсен çав звеносене уйрăм участоксем, лашасем, машинăсем уйăрса памалла.

Вир — оборона ĕçĕнче паха культура пулса тăрать. Пирĕн районри кашни колхозăн килес çул 10—15 гектар вир акмалла. Вир акма хатĕрленме кашни звено паянах тытăнтăр. Килес çул кашни гектартан 20 центнертан кая мар вир туса илме тăрăшмалла. Çĕрулми — иккĕмĕш çăкăр. Çĕрулмине хальхинчен икĕ хут, виçĕ хут ытларах туса илер. Çапла тумашкăн çĕре лайăхрах сухалар, лайăхрах çемçетер.

Вĕренмесĕр хальхи агротехникăна лайăх пĕлсе çитме çук, çĕр ĕçне нумай малалла яма çук. Комсомолецсемпе çамрăк колхозниксем çĕрĕçне лайăх пĕлекен, опытлă ӳресченсем пулас теççĕ пулсан, вĕсен тăрăшса вĕренмелле. Эпир кашни колхозрах агротехника кружокĕсем, стахановла шкулсем тума сăмах паратпăр. Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра 450 сухаçă, 150 акакан, 300 сӳреçĕ тата 50 яровизатор вĕрентсе хатĕрлетпĕр.

Кĕркуннепе хĕлле лайăх вĕренни пире çуракине агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх ирттерме май парĕ. Эпир нихăш çĕрте те ăшăх сухалама, алăпа акма, вăрлăха начар витсе хăварма, сухаланă хыççăн чылай вăхăт иртсен тин çеç сӳрелесе акма памăпăр.

Çуракине лайăх туса ирттерес ĕçре эпир стена хаçачĕсемпе, боевой листоксемпе, массăллă-политикăллă ĕçĕн пур майĕсемпе те анлăн усă курăпăр.

Хамăр умра тăракан задачăсене йĕркеллĕн те лайăх пурнăçламашкăн пирĕн çамрăксемпе таччăнрах çыхăнас пулать, комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене çирĕплетес пулать. Комсомолецсен чи малтанхи задачи — çамрăксене вĕрентсе ӳстересси, вĕсен политикăллă тата культурăллă тавракурăмне анлăлатасси пулса тăрать. Кашни колхозрах хĕллехи вăрăм каçсенче вулав сурчĕ ĕçлетĕр, унта пурнăç вĕресе тăтăр. Пултарулăх кружокĕсем урлă, çамрăксен интереслă вечерĕсем урлă колхозсенчи чи лайăх стахановецсене комсомола явăçтарар.

Пирĕн нумай хуласемпе ялсем нимĕç оккупанчĕсен пусмăрĕнче асапланаççĕ-ха. Вăрçă ĕçĕсем тĕпренех пирĕн майлă улшăнчĕç. Анчах тăшмана татăклăн çĕнтерес тесен, татах та ытларах вăй хурса ĕçлемелле, тылра пĕтĕм совет халăхĕн хăйĕн вăйне шеллемесĕр ĕçлемелле, фронтра Хĕрлĕ Çарăн пĕлсе тата хастарлăн кĕрешмелле.

Комсомолецсемпе комсомолка юлташсем, Чăваш республикинчи çамрăк колхозниксемпе колхозницăсем! Сталин юлташа панă сăмаха пурнăçласа, килес çул кашни гектартан 100 пăт тыра туса илессишĕн ялти мĕнпур çамрăксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярар! Хĕрлĕ Çара тыра, çĕрулми, пахча-çимĕçсем ытларах туса парса, ăна малалла ăнăçлă наступлени туса пыма пулăшар. Хамăр пĕтĕм вăя, хамăр хастарлăхпа пултарулăха фронта пулăшас ĕçе парар. Колхозсенче хамăр çамрăк вăя шеллемесĕр ĕçлесе, ирсĕр тăшмана çĕнтерес сехете çывхартар.

Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин ертсе пынипе, нимĕç оккупанчĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкмашкăн, вĕсене хамăр çĕршывран хăваласа кăлармашкăн — малалла!

(Вăрнар районĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăк колхозниксен слетĕнче йышăннă, çав слетра 500 çын ытла пулнă.)

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕнче

ВЛСКМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ Вăрнар районĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан комсомолецсемпе çамрăксен слечĕ Чăваш АССР-ĕнчи мĕнпур комсомолецсемпе çамрăксене 1944-мĕш çулта гектартан çĕршер пăт тыра туса илессишĕн социализмлă ăмăрту сарса яма чĕннине пăхса тухнă.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ çамрăк колхозниксен пуçарăвне ырланă. Вăрнар районĕнчи çамрăк колхозниксен çав чĕнĕвне колхозсенчи, совхозсенчи, МТС-сенчи комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсенче сӳтсе явма тата 1944-мĕш çулта гектартан çĕршер пăт тыра туса илессишĕн ялти çамрăксем хушшинче социализмлă ăмăрту сарса яма сĕннĕ.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Суту-илӳ Халăх Комиссариатĕнче тата РСФСР-па ССР Союзĕн Центросоюзĕнче

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ тата РСФСР-па ССР Союзĕн Центросоюзĕ, потребкооперации работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи виççĕмĕш кварталти итогĕсене пăхса тухнă.

Сĕнтĕр районĕнчи Калайкассинчи сельпона (председателĕ Таймасов юлташ, местком председателĕ Азаров юлташ) виççĕмĕш премии памалла тунă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуркасси сельповĕн Паникассинчи магазинне (заведующийĕ Иванова юлташ) пĕрремĕш премии, Амачкино сельповĕн Пĕчĕк Маклашкинăри лавкине (заведующийĕ И. Карпова) тата Шуркассинчи магазина (заведующийĕ Николаева) виççĕмĕш премисем памалла тунă.

Уйăхри плана—вунă кун хушшинче

ЙĔПРЕÇ. Буинскри «1-ое мая» артель коллективĕ халăхсен аслă çулпуçĕн Сталин юлташăн докладне итленĕ хыççăн ноябрьти плана срокчен тултарма пулчĕ. Вăл хăйĕн сăмахне тивĕçлĕн пурнăçа кĕртет. Кĕпе-тумтирсем çĕлес тĕлĕшпе уйăхри плана 10 кун хушшинче 108 процент тултарнă. Слугина, Войнер юлташсем паха результатсем параççĕ.

Н. МЕЛЬНИКОВА.

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăх

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли 1943 çулхи иккĕмĕш çур çулти плана ноябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне мĕнле тултарнине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Хатĕрлес енĕпе
Йĕпреç	93,3	71,4	1	2
Канаш	75,1	70,2	2	6
Шăхасан	74,0	74,2	3	1
Улатăр	72,6	[illegible]	4	7
Сĕнтĕрвăрри	71,6	71,1	5	3
Вăрмар	70,7	71,2	6	4
Вăрнар	67,9	58,2	7	10
Иш[illegible]	[illegible]	46,0	8	17
Сĕнтĕр	64,7	41,5	9	22
Первомайски	63,8	70,5	10	5
Элчĕк	62,9	40,1	11	16
Çĕрпӳ	61,2	63,8	12	9
Калинино	[illegible]	51,3	13	11
Комсомольски	56,9	37,5	14	24
Шупашкар	56,3	42,4	15	20
Советски	56,2	42,1	16	21
Элĕк	55,6	42,8	17	19
Куславкка	54,9	48,5	18	14
Етĕрне	51,3	59,1	19	23
Çĕмĕрле	48,6	44,0	20	18
Красноармейски	46,5	47,0	21	15
Октябрьски	43,2	34,6	22	[illegible]
Тăвай	[illegible]	66,6	23	8
[illegible]	35,1	49,5	24	13
Шăмăршă	33,8	50,7	25	12
Хĕрлĕ Чутай	32,2	35,1	26	25
Яковлевски	32,1	29,0	27	27
[illegible]	[illegible]	[illegible]	28	28

Тăвай тата Октябрьски районсем çаплах сӳрĕк ĕçлеççĕ

БУИНСК, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа 7 кун иртрĕ ĕнтĕ. Вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ кирлĕ таран мобилизацилеме вăхăт çителĕклĕх пулчĕ. Анчах та Тăвай тата Октябрьски районсенчи партипе совет организацийĕсем çав кирлĕ ĕçе хăвăртлатма шутламаççĕ.

Тăвай районĕнчен вăрманта куллен çуран 135 çын, лашапа 175 çын ĕçлемелле. Халĕ вăхăтра çуран 120 çын, лашапа 31 çын çеç ĕçлеççĕ. Октябрьски район пирки те çавнах каламалла. Çавăнпа та ĕнтĕ ку районсем вăрман хатĕрлемелли плана тултарассине хăрушлăх умĕнче хăварса пыраççĕ. Сăмахран, Тăвай районĕнчи колхозсем 23.000 кубометр хатĕрлес вырăнне 15.000 кубометр ытларах çеç хатĕрленĕ. Вăрман турттарасси татах та каярах юлса пырать.

Фронтпа çĕршыва кирлĕ йывăç материалĕсене вăхăтра тăратасси — куллен тумалли ответлă ĕç пулса тăрать. Тăвай тата Октябрьски районсенчи партипе совет организацийĕсен çавна ăнланса илес пулать, вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ çителĕклĕ таран мобилизацилемелле.

Я. ВАСИЛЬЕВ.

Ют çĕршывсенче

Берлина бомбăсем пăрахса ишĕлтерни

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Англин авиацийĕ юлашки вăхăтра Берлин çине бомбăсем пăрахса Берлина мĕн тери хытă ишĕлтерни çинчен Швецири нумай хаçатсем çырнă тăрăх çĕнĕрен тĕплĕнтерех пĕлтерет. «Афтонтидининген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх хулари хăшпĕр районсене пĕтĕмпех вут хыпса илнĕ. Берлинри мĕнпур предприятисемпе учрежденисем ĕçлеме чарăннă, мĕншĕн тесен вĕсенче ĕçлекен çынсене хулари инкек курнă çынсене çăлма мобилизациленĕ.

Бомбăсем пăрахнă вăхăтра Берлинра пулнă шведсем, ноябрĕн 23-мĕшĕнче унтан вĕçсе килнĕскерсем, çапла каласа панă: Берлинăн вăта çĕрти пайĕ питĕ пысăк сиен курнă. Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин çуртĕ çунса кайнă. Риббентроп пурăннă çурт пĕтĕмпех ишĕлсе аннă. Геббельс тата Гитлер пурăнакан çуртсенче те пушарсем тухнă. Паризерплацăн çурçĕр енĕ пĕтĕмпех çунса кайнă. Хĕçпăшал министерствин çурчĕ ним юлмиччен çунса кайнă.

«Стокгольмс тиднинген» хаçатра çав пушарсене хăйсен куçĕпе курнă çынсем каласа панине пичетленĕ. Çав çынсем каланă тăрăх, Тиргартенштрассе ятлă урама ноябрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пăрахнă бомбăсем пысăк сиен кӳнĕ пулнă; ноябрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле вара çав урама пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Будапештерштрассе ятлă урам пĕтĕмпех çунса кайнă. Вильгельмштрассе ятлă урамран ишĕлчĕк купи çеç тăрса юлнă.

«Афтон тиднинген» хаçат илнĕ хыпарсем тăрăх, ноябрĕн 25-мĕшĕнче ирхине Берлинра çаплах вăйлă пушарсем пынă. Хулана çарсем илсе пынă, çав çарсем сиен курнă çуртсене сирпĕнтере-сирпĕнтере яраççĕ. Берлина Лейпцигран, Дрезденран тата Штеттинран татах пушар командисем илсе пынă. Берлинра çакăн пек сăмах çӳрет: ноябрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбăсем пăрахнă чухне Германин зенитнăй батарейисем боеприпассемсĕр ларнă,—теççĕ.

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Базлер нахристен» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Берлинран Базель хулине тӳрех çӳрекен пĕр поезд та пыман. Темиçе поезд пилĕк сехет ытла кая юлса пынă. Берлинпа телеграф тăрăх çыхăнма çук.

«Нюа даглитт аллехандa» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбăсем пăрахнине пула 25.000 çын вилнĕ, 35.000 çын çурт-йĕрсĕр тăрса юлнă тесе шутлаççĕ.

НИМĔÇСЕН ДАНИРЕ ТĂРАКАН ÇАР ЧАÇĔНЧЕ БУНТ ПУЛСА ИРТНĔ

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Данири пресс-бюро пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Копенгаген портĕнче нимĕç çарĕсен пĕр чаçĕнче (ăна Норвегие яма судно çине ларнă чухне) бунт сиксе тухнă. Салтаксемпе полевой жандармери пĕр-пĕрин çине пăшалпа вăйлăн пеме тытăннă. Çав тытăçура 150 нимĕçе вĕлернĕ е амантнă. Бунта хутшăннă 16 офицер тарма хăтланнă. Вĕсенчен 8-шне полици тытса чарнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ТУЛОН ТАТА СОФИЯ ХУЛИСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: ноябрĕн 24-мĕшĕнче «Вĕçекен крепость» йышши самолетсен пысăк соединенийĕсем Тулон хулине тапăннă. Вĕсем унта подводнăй лодкăсен базине атакăланă. «Либерейтор» йышши самолетсен соединенийĕ София хулине тапăннă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паян, ноябрĕн 28-мĕшĕнче, юлашки кун сасăллă илемлĕ

„ВОЗДУШНЫЙ ИЗВОЩИК"

ятлă кинокомеди кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20 тата 22 сехетре.

Ноябрĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун сасăллă илемлĕ

«БОРЬБА ЗА СОВЕТСКУЮ УКРАИНУ»

ятлă çĕвĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20 тата 22 сехетре.

Касса кăнтăрла 12 сехетрен пуçласа ĕçлеме тытăнать.
Коллективпа пырса курма паракан заявкăсене кашни кунах ирхине 9 сехетрен пуçласа 12 сехетчен илеççĕ.

Часах

„КОМСОМОЛЬЦЫ"

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Анаткасри „Вперед" ятлă промысла артелĕн çаврăшка каучук пичетне, сухалнă пирки, тĕрĕс мар тесе шутламалла.

Чăваш АССР-ĕнчи адвокатсен коллегийĕн президиумĕ çар çыннисен çемйисен чл кĕсене тата Отечественнăй-вăрçă инвалидĕсене çакăн çинчен пĕлтерет: çурт-йĕр, пенси, налог тĕлĕшпе тата граждански е трудовой ĕçсем тăрăх квалификациллĕ адвокатсем юридически пулăшу параççĕ. Канмалли кунсемсĕр пуçне кашни кунах 9 сехетрен пуçласа 17 сехете çитиччен пыма юрать.
Адрес çапла: гор. Чебоксары, Красная площадь, 2, Чебоксарская Юрконсультация.
Районсенче çав пулăшăва халăх сучĕсем çумĕнчи консультацисенче параççĕ.

2—1.

Пур колхозсене те тата выльăх-чĕрлĕх усракансене пурне те çакăн çинчен пĕлтеретпĕр: Чăваш АССР Совнаркомĕ 1943-мĕш çулхи августăн 20-мĕшĕнче йышăннă 1087-мĕш №-лĕ постановлени тăрăх, аш-какай мĕнлине тĕрĕслесе тăракан пунктсене пуснă выльăх-чĕрлĕх какайне илеме çаптарма илсе пынă чухне пуснă выльăхăн тирне те илсе пымалла е çав выльăх тирне „Заготживсырье" пунктне кайса пани çинчен пĕлтерекен квитанцие илсе пымалла.
Çав квитанцие е выльăх тирне илсе пымасан, какай çине илеме çапса памаççĕ.

ВЕТУПРАВЛЕНИ, ЗАГОТЖИВСЫРЬЕ.

Чăвашсен Государство филармонийĕн юрăсемпе ташăсен государство ансамбльне хористсем кирлĕ: сопраносем, альтсем, тенорсем, бассем; çавăн пекех тата музыкантсем кирлĕ: баянистсем, трубачсем, скрипачсем.
Адрес çапла: гор. Чебоксары, Дом печати, 2-й этаж, комн. 1[illegible].

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1160 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.